Сĕнтĕрвăрри район хаçачĕ

# Пирĕн сăмах
# Наше слово

Хаçат 1932 çулхи
юпа уйăхĕн 14-мĕшĕнче
тухма пуçланă

2018
Утă
28
шăматкун
56 №
(10211)
хакĕ
ирĕклĕ

## Чунĕпе пуян, ĕçĕпе хисеплĕ

**Ăстакасси ял вулавăшĕн библиотекинче ĕçлекен Инна Петровна ВЕЛИКАНОВĂНА ялта кăна мар, районта та лайăх пĕлеççĕ. Хăйĕн ăсталăхĕпе пултарулăхне вăл республика шайĕнчи тĕрлĕ конкурссенче пĕрре мар кăтартса, çирĕплетсе пачĕ. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн Инна Петровна нумаях пулмасть пысăк наградăна тивĕçрĕ.**



Районăн çак эрнере иртнĕ отчетлă пухăвĕнче хавaслă лару-тăрура пултаруллисене саламларĕç. Республика Пуçлăхĕн 2018 çулхи утă уйăхĕн 16-мĕшĕнче çирĕплетнĕ 82-мĕш Указĕпе килĕшӳллĕн Инна Великанова культура сферинче нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн **«Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ята тивĕçрĕ.** Инна Петровна чăннипех те пултаруллă библиотекарь. Вăл «Вулавăш – ялти историпе краеведени центрĕ» программăна пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшать. Авалхине паянхипе çыхăнтарас-сишĕн, мăн асаттемĕрсем хăварнă ăс-хакăл культурине упрассишĕн нумай вăй хурать, çак ĕçе çамрăк ăрăва та явăçтарать. Пархатарлă ĕçĕн çимĕçĕ «Тымарсем» литературăпа краеведени пĕрлешĕвĕнче тата «Кăмăл» фольклор коллективăн ĕçĕ-хĕлĕнче аван курăнать.

Хăйĕн ĕçне яваплăха туйса тата çӳллĕ шайра пурнăçлакан библиотекарь темиçе хут та Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсем илнĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

## Тĕнчери тăнăçлăхпа лăпкăлăх чупăвĕ

**1987 çулта Шри Чинмой индус тĕнчери халăхсем тата çĕршывсем хушшинчи туслăха çирĕплетес тĕллевпе «Тĕнче чупăвĕ» акци йĕркелесе янă. Чупу тĕнчери тĕрлĕ çĕршывра икĕ çулта пĕрре иртет.**



Раççейре çак чупу марафонне 1991 çултан ирттерме пуçланă. Ăна чупакансен ушкăнне икĕ «турата» пайласа ирттереççĕ. Маршрутсем кашни çул улшăнса тăраççĕ. Кăçал хĕвелтухăç «туратĕн-чи» спортсменсем Тюмень хулинчен пуçласа Владивостока çитиччен чупаççĕ. Вĕсен унта, 8 пин çухрăм чупса, авăн уйăхĕн 21-мĕшĕ валли çитмелле. Хĕвеланăç ушкăнне кĕрекенсен çулĕ кĕскерех, 7 пин çухрăм пулĕ: çул çурла уйăхĕн 24-мĕшĕнче Ставрополь хулинче вĕçленет.

«Тĕнче чупăвĕ» акцин факелне Сĕнтĕрвăрри тата Çĕрпӳ районĕсен чиккинче урхаскушкăсем çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç. Делегацисем тĕл пулнă вырăнта республика гимнĕ янăрарĕ. Урхаскушкăсен ушкăнĕнче - вунă çамрăк. Ăна вырăнти шкулта физкультура вĕрентекен А. Краснов ертсе пычĕ. Урхассем Шуршăл пăрăнăвĕ патне çитиччен вунпилĕк çухрăм чупса тухрĕç. Вĕсенчен эстафетăна шуршăлсем йышăнчĕç.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Суту-илĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕсем тата ветеранĕсем!**
**Сире професси уявĕпе чĕререн саламлатăп!**

Чăваш Ен потребительсен рынокĕн тытăмĕ юлашки çулсенче пĕр тикĕс аталанса, тавар çаврăнăшĕ ӳссе пыраççĕ, суту-илĕвĕн хальхи йышши объекчĕсем уçăлаççĕ, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркеленеççĕ, халăх ыйтăвне тивĕçтермелли прогрессивлă технологисем вăй илеççĕ, таварпа пулăшу ассортименчĕ пуянланать.

Суту-илӳ ĕçченĕсем професси ăсталăхне куллен ӳстерсе çынсен кăмăлне тивĕçтерес енĕпе пĕлтерĕшлĕ тĕллевсене пурнăçлаççĕ. Республикăра пурăнакансен хальхи вăхăтра тавар туянас е пулăшу илес енĕпе чăрмав çук. Паянхи конкуренци тапхăрĕнче пахалăхлă тавара тата пулăшăва йӳнĕ хакпа сĕнекенсем кăна ăнăçуллисем пулса тăраççĕ. Потребительсем ырă сунса кĕтекен тата хăйсене тимлĕ пăхакан предприятисемпе организацисене ытларах кăмăллаççĕ. Кун пек чухне вĕсен саккунлă прависене тата интересĕсене тивĕçлипе хаклани те пĕлтерĕшлĕ.

Суту-илĕвĕн мĕнпур ĕçченне республика экономикине аталантармашкăн сумлă тӳпе хывнăшăн, пуçаруллă пулнăшăн тата çĕнĕ çитĕнӳ тума ăнтăлнăшăн чĕререн тав тăватăп. Сире уяв ячĕпе саламласа çирĕп сывлăх, тăнăçлăх сунатăп, ĕçĕрсем ăнса пыччăр, ĕмĕтĕрсем пурнăçланччăр!

**Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев.**

Парти проекчĕ

## Тăлăх ачасене хваттерпе тивĕçтерĕç

Патшалăх Думи тăлăх ачасене тата пăхса усракансăр тăрса юлнă ачасене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтермелли йĕркене улшăнусем кĕртесси çинчен калакан саккун проектне виççĕмĕш вулавпа йышăннă. Ун тăрăх çав ачасен саккунлă представителĕсем тăлăхсене тивĕçлĕ списока кĕртме ыйтса хăйсемех заявлени çырма пултараççĕ.

Тепĕр тапхăрĕ Правительство пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерме кирлĕ тăлăх ачасене шута илме мĕнпур регионсем валли пĕр йĕрке çирĕплетессипе çыхăннă. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти проекчĕпе ĕçлекен О. Окунева çакнашкал йĕрке йышăнма хистекен сăлтава палăртать: учетра тăман тăлăх ачасем халиччен суд урлă кăна хваттер илме пултарнă. Халĕ вара тăлăх ача 14 çул тултарнă хыççăн саккунлă представитель виçĕ уйăх хушшинче ăна учета тăратмасть пулсан, вăл ĕçе опека органĕсем тăваççĕ.

Федераци саккунĕн 44-мĕш статйине кĕртнĕ улшăнусем тăрăх хваттер илмелли вăхăт та чакать, кĕскелет. Кĕтмен çĕртен тăлăх ачапа инкек сиксе тухас пулсан (сăмахран, вăл чирлесе вилет), унăн çемйин çав хваттерте малалла та пурăнма ирĕк пур, вĕсене никам та унтан кăларса яраймасть.

Çĕнĕ йĕркесем 2019 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕреççĕ.

**«Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин Чăваш Енри уйрăмĕ.**

## Çынсен шухăшĕсене шута илĕç

**Юлашки вăхăтра халăхра чи хĕрӳ калаçу çуратакан тема вăл – пенси законодательствине улшăнусем кĕртесси.**

Халиччен хĕрарăмсем 55 çулта, арçынсем вара 60 çулта пенсие тухнă пулсан, малашне арçынсем 65 çулта, хĕрарăмсем 63 çулта тухмалла тăвасшăн. Кун пек улшăнусем пур чухне те пирĕнтен килмеççĕ, пурнăç çапла ыйтать. Çултан-çул Раççейре ĕçлекен вăй питти çынсен шучĕ сахаллансах, пенсионерсен йышĕ вара нумайлансах пырать. Пенсие ӳстерсе парасса кашниех кĕтет. Юлашки вăхăтри демографи лару-тăрăвне шута илес пулсассăн, пенси укçин виçине хăпартма мар, çулсерен пенсионерсен йышне кĕрекен çынсене пенси укçи тӳлесе тăрасси те йывăрланĕ. Шăпах çак сăлтавсене шута илет Раççей Президенчĕ В.Путин. Халлĕхе ку закона йышăнман. Унччен кирек кам та хăйĕн кăмăлне палăртма пултарать. Йышăнăва çынсен шухăшне шута илсе тăвĕç. В.Путин пенси законодательствине улшăнусем кĕртес ыйту тавра йĕркеленнĕ лару-тăрăва тимлĕн сăнаса тăрать.

**Ю.КОРОТКОВ,**
**шахмат клубĕн ертӳçи.**

